**ЁМĔТ** **МЕЧТА**

Кĕвви Ю. КУДАКОВĂН
Сăвви Ю. СЕМЕНТЕРĔН

Музыка Ю. КУДАКОВА
Слова Ю. СЕМЕНДЕРА




вă - рăм чă - рăш ка - са - тăп, вă - рăм чă - рăш
ка - са - тăп та хит - ре кер - мен лар - та - тăп.
1.
Вă - рăм чă - рăш ка - са - тăп та хит - ре кер - мен лар - та - тăп.




Эй, тимĕрçĕ, тимĕрçĕ,
Пуртă туса парсамччĕ:
Эпĕ çавă пуртăпа
Вăрăм чăрăш касатăп,
Вăрăм чăрăш касатăп та
Хитре кермен лартатăп.

Эй, пиччеçĕм, пиччеçĕм,
Урхамахна парсамччĕ:
Эпĕ çав урхамахпа
Суха тума каятăп,
Суха тума каятăп та
Сарă тулă акатăп.

Эй, кĕвĕçĕ, кĕвĕçĕ,
Юрă хывса парсамччĕ:
Эпĕ çавă юрăпа
Халăх умне тухатăп,
Халăх умне тухатăп та
Сире савăнтаратăп.

**Асăрхаттарни. Кашни куплетăн юлашки икĕ йĕркине икшер хут юрламалла.**

*Сементер, Ю. Ĕмĕт: «Эй, тимĕрçĕ, тимĕрçĕ» : [юрă] / кĕвви Ю. Кудаковăн ; сăвви Ю. Сементерĕн* // Чăваш музыки = Чувашская музыка. – Шупашкар, 2002. – С. 33-35.